# Иван Яковлевăн тăван ялĕнче

***Иртнĕ шăматкун Чăваш Енĕн пысăк делегацийĕ Иван Яковлевăн тăван ялне – Тутарстанри Теччĕ районне кĕрекен Кăнна Кушкине – çитсе килнĕ. Çулçӳреве Çутта кăларуçа асăнса иртернĕ: вăл 1930 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă.***

Делегаци йышĕнче /ăна ЧР культура министрĕн заместителĕ Вячеслав Оринов ертсе пынă/ Чăваш наци конгресĕн хастарĕсем Геронтий Никифоров, Юлия Анисимова, Нина Андреева, ЧР Профессионал писательсен союзĕн правленийĕн членĕсем Елена Светлая, Василий Пушкин, Наци библиотекин ĕçченĕ Вера Архипова, ЧР патшалăх электрон тата кинодокументаци архивĕн ĕçченĕ Артур Галкин, 1988-1993 çулсенче ЧР культура министрĕнче ĕçленĕ Герольд Алексеев пулнă.

Шупашкарсене Теччĕ районĕн пуçлăхĕн заместителĕ Альберт Гасимов, районти чăваш культура центрĕн председателĕ Володар Тимофеев, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Гаврилов, Кăнна Кушкин вăтам шкулĕн учителĕсемпе вĕренекенĕсем кĕтсе илнĕ. Патриархăн палăкĕ умне чечек çыххисем хунă, унăн ячĕллĕ музейпа паллашнă хыççăн хăнасем ял урамĕсемпе утса тухнă. Кунта кăсăкли, чăнах та, нумай. Кăнна Кушки çавăн пекех чăваш театрĕн, киновĕн йĕркелӳçине Иоаким Максимов-Кошкинские, Чăваш халăх поэтне Александр Алкана, Чăваш халăх артистне Анна Казаковăна, Алексей Рекеев этнографа, Тихăн Петĕркки, Александр Тимбай çыравçăсене çуратса ӳстернĕ. Вĕсен ячĕпе лартнă стела умне те хăнасем чечек çыххисем хунă.

Вырсарникун Шупашкарта И.Яковлев палăкĕ умĕнче асăну митингĕ иртрĕ.